*Спенсер йёркисем

**Хусанкай**

1.

Арканнă чиркӳсем, тусан палканă
кив ёмĕрĕн каштийĕ хуçăлсан.
Укăлчаран тухнă та алă панă
хăв ял-йышна: куçу шывланнă сан.
Чăваш сăввин чăн-чăн чапне сарсан,
тантăшусем сана курса çĕкленнĕ.
Яту сан кайăк пек çунат сарсан
хăвна сăпайлăхпа эс тĕрĕсленĕ,
тăван поэзире ятна эс никĕсленĕ,

2.

Ик çын – ик паллă ят хутран-ситрен
чунна хавхалантарнă, хурлантарнă.
Курман эс вĕсене сăнран, питрен:
эс Ивановшăн, Çеçпĕлшĕн хăпарнă
çырулăх пусмипе – хыçа хăварнă
тантăшусен нумай-нумай ретне.
Тăван çĕршыв тăван аннӳ пек сарнă
сана ытамласа илесшĕн аллине –
выртса эс ĕçнĕ пултарулăх çăл куçне.

3.

Санпа, тен, ауклатнă пуль Есенин
пĕрремĕш сăввунта.
Хăв ăшунта

эс туйнă картари утсем кĕçеннĕн
çырас сăввусене. Умри хута
перо вара тĕрленĕ çĕр хутах.
Сан сăввупа вулакансем мухтаннă, –
ăсталăхшăн хăть сик шыва, вута! –
çын тупнă килĕшӳлĕх, чарсăрланкă:
çил çунату Олимп пехилĕпе-çке аннă!

4.

Кун çул кункри çинче уна-уна
тĕпченĕ вăхăту: «Çитет-и тӳсĕм?!
Эс пăхнă тӳррĕн йăл кулса кăна:
– Çук, чуста мар эпир – чăн хурçă тӳсĕм.
Ах, самана! Вăл яланах ерçӳсĕр,
тăрса юлсан, кĕтсе тăмасть сана:
вăл юратать хăйпе утакана.
Пĕр вĕçĕмсĕр арланнă пурнăç сӳсĕ,
çулсен çăмхисене кустарнă самана.

5.

Çĕршывăм тӳснĕ пысăк çухату та
пĕлĕтлеймен чăваш чун-хавалне.
Плакатсенчи малашлăх пулнă çутă,
тыттарнă хресчене нуша чулне.
Хĕрӳ поэтăн шухăш-кăмăлне
суя ĕненӳрен упранă пӳлĕх
халь чĕннĕ çĕнĕ сăвăсен йышне.
Ăшра тапса тăран таса хĕрӳлĕх
ăсталăх ялавне тата çĕкленĕ çӳллĕ.

6.

Этем шăпи çĕршывĕпе татуллă;
апла пулсан, вăл ун юратăвне
илет тивĕçлипе – çĕр уншăн тулăх,
çавах пĕлет вăл ун хакне, сумне.
Мĕскер хушса калар-ха кун çумне?
Ун кун-çулне паян ытараймасăр
тĕпчевçĕсем тĕпчеççĕ. Сăмахне
ан виç чĕре тарасипе хавассăр! –
япала пек тытса пăхас килет шанмасăр.

7.

Пĕррехинче юлташ каларĕ ăшшăн:
– «Онегина» вулатпăр чавашла!
Ларма-тăма памасть палханнă ăшăм,
çӳресчĕ çĕр çинче ташла-ташла, –
çук, пулмĕччĕ пĕрре те кулăшла!
Юлташ вулать – итлетĕп эп чĕнмесĕр:
чĕлхем, чĕлхем! Эс шурă акăшла
чун кӳллинче ишен хум çĕклемесĕр –
тĕнче умне çапла тухатăн эсĕ.

8.

Мăнаçлă эсĕ Хусанкай пуртан,
ăс-хакăлу ялан ĕçчен те йӳрĕк.
Эс кӳлмĕн кăмăлна кĕске турта,
çӳремĕн шухăшсăр, тĕллевсĕр, сӳрĕк,
Ăсталăху сана ялан чыс кӳрĕ;

нихçан та пăрăнса унран ан кай.
Сана ялан çул кăтартса вăл çÿрĕ -
шанса пăхать пек сан çине пĕрмай,
гранит кĕлеткене куçсан та, Хусанкай;

1983 çул.

*Спенсер йĕркисем е урăхла «Спенсер строфисем». Ку виçене акăлчан поэчĕ Эдмунд Спенсер пуçарса янă. Каярахпа ку виçепе тепĕр акăлчан поэчĕ Дж. Байрон «Чайльд-Гарольд çул çÿревĕ» тата «Дон Жуан» произведенийĕсене хайланă чухне усă курнă.